## Ф. П. ПАВЛОВ

(1892—1931)

Чăваш музыка искусствин классикĕ Ф. П. Павлов тăван литературăра та пысăк талантпа пултарса ĕçленĕ: драматургире те, поэзире те, эстетикăпа критикăра та тарăн йĕр хăварнă. Вăл чăваш культури хăватлăн чĕрĕлме пуçланă тапхăрта, пирвайхи революци çулĕсенче К. Ивановпа, Н. Шупуççыннипе юнашар пултару ĕçĕн касалăкне тăнă. Чĕмпĕрти литература шкулĕнче çыравçă таланчĕ ӳссе çĕкленнĕ, çуначĕсене сарнă.

Федор Павлович Павлов Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Патăрьелĕнче (Чăваш Республикин Çĕрпӳ р.) 1892 çулхи авăн уйăхĕн 13(25)-мĕшĕнче çуралнă. 1901 çулта ялти земство училищине çӳреме пуçланă. Ун хыççăн Иккассинчи (Шупашкар районĕ) икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Ку тапхăр çыравçă биографийĕнче революци сывлăшĕн витĕмĕпе палăрса юлнă. Ф. Павлов каярахпа çырнă асилĕвĕнче хăйĕн юратнă вĕрентекенĕсем Н. Ф. Беляевпа Ф. Н. Николаев пулни çинчен каласа парать. Вĕсем иккĕш те революцилле шухăш-кăмăлласкерсем пулнă, социалла пĕртанлăх, ирĕклĕх идейисене халăх хушшине сарнă, шкулта та çак ыйтусем тавра ачасемпе калаçусем хăюллăн хускатнă. Прокламацисем салатса таврари ялсенчи хресченсене пăлхатнăшăн часах вĕсене иккĕшне те ĕçрен кăлараççĕ, Н. Беляева полици арестлет. Çак ĕçсем Ф. Павлов асĕнче ĕмĕр манăçмалла мар тĕрленсе юлаççĕ.

1907 çулхи çуркунне Иккасси шкулĕнчен вĕренсе тухсан, вăл хăйĕн пĕлĕвне татах ӳстерме шутлать. Ф. Павловăн ашшĕ, хăйне вĕреннĕ çынна тухма тӳр килмесен те, пурнăç пăрăнăçĕсене ăнкаракан, хăй ăсĕпе пурăнакан хресчен пулнă. Вăл çынсемпе хутшăнма юратнă, уçă кăмăллă та тараватл этем, юрăсемпе халап-юмахсем нумай пĕлнĕ. Сăмахран, Чĕмпĕр шкулĕнче

вěреннě чухне Г. Комиссаров (хăй те Патăръелěнчен) çуллахи каникул вăхăтěнче унран тěрлě халапсем çыра-çыра илнине асăнать. Вěренсе ăс-пуçне уçайман хресченěн йывăр пурнăçне пайтах ылханнăскер, вăл ывăлне епле пулсан та малалла верентме шутлать. Çав тěллевпе 1907 çулхи кěркунне Хěветěре Чěмпěрти чăваш шкулне леçет. Экзаменсене ăнăçлă тытна ачана И. Я. Яковлев иккěмěш класа илет. Ашшě укçа-тенкěпе пулăшма вăй çитерейменнине шута илсе, Ф. Павлова Етěрне уесěн земстви стипенди парса тăма йышăнать.

Революци юхăмě Чěмпěр шкулěн пурнăçне те вăйлă витěм парать. Ф. Павлов вěренме пуçланă вăхăт тěлнелле шкулта вěренекенсен пăлхавě те пулса иртнě ěнтě, К. Ивановпа Н. Шупуççынни вěреннě класа пěр ача юлмиччен кăларса янă. Çакнашкал лару-тăру вěренекенсен политикăлла тавракурăмне сарма пулăшнă, вěсене кулленхи ěç-пуçсем çине тишкерўлле куçпа пăхма хистенě.

Политика сывлăшěн уçă варкăшě Ф. Павлов шухăш-кăмăлне те тěпрен хускатнă, вăл вěрентекенсем йышěнче те демократи идеалěсене кăмăллакансем тата консерваторсем пуррине часах ăнланса илет, Чěмпěрте пуçласа чăваш наци культури пирки тарăн шухăша ўкет. Ку енěпе И. Я. Яковлев çур ěмěр хушшинче аталантарса пырса никěсленě педагогика системинче пурмайсем те çителěклě пулнă. «Пěтěм наци культурине çěнěрен чěртсе янă çăлкуç»,— тенě А. В. Луначарский чăваш лицейěн çак хăйне евěрлěхне палăртса [36].

Шкул программине кěрекен предметсене тăрăшса вěреннě хушăра Ф. Павлов хăйěн пěтěмěшле культурине ўстерес тěлěшпе хытă çине тăрать, чун витěр сăрхăнса чăн-чăн культура никěсне хывăнакан пуянлăха ăша илет. 1908 çулта «Чăваш халлапěсем» кěнекере К. Ивановпа Н. Шупуççынни хайланă сăвăпоэмăсем, унтан çавсемех Лермонтовран куçарнă хăш-пěр хайлавсем уйрăмшар кěнекен пичетленеççě. Çапла майпа икě поэт хывнă сукмакпа Ф. Павлов та часах Лермонтов поэзийěн шăнкăрти çăлкуçě патне пырса тухать, вырăс поэчě унăн юратнă вěрентекенě пулса тăрать.

Çакна каламалла: Ф. Павловшăн поэзи яланах тенě пекех чун уççи вырăнне пулнă, вăл çак ěçе çын çине кăлармасăр, вăрттăн тума кăмăлланă. Тен, хěври, чун патěнчи шухăш-туйăма палăртма альбом е кун кěнеки валли юравлă жанр форми суйласа илнěрен килнě ку? Пичетлес тесе те хыпăнман курăнать автор вěсене.

Поэзи Ф. Павловшăн мăшăр çунатлă шурă акăшăн хăрах çуначě пулнă, тепěр çуначě вăл — музыка. Чăннипех те турă панă таланчě (моцартлăх) унăн музыкăра тарăнрах, туллинрех, ирěклěнрех палăрнă, тен. Чун-чěререн шăранса тухакан кěвě-çемě вара Ф. Павловăн лирикăлла сăввисене те хăйне майлă янравлăхпа çепěçлěх кўрет. Музыка çапла майпа интимлă лирикăн уйрăлми пайě пулса тăрать, ăна çěнě тěспе пуянлатать.

Каярахпа ҫак туртăм ҫыравҫăн драма формипе ҫырнă хайлавĕсенче те уҫăмлă палăрать; сăмахран, «Ялта» пьесăра юрăкĕвĕпе илемлетнĕ сценăсем тăтăшах тĕл пулаҫҫĕ.

Чĕмпĕр шкулĕнче Ф. Павлов кĕске вăхăт хушшинчех чăн-чăн профессилле музыкант пулса тăрать. Музыка теорипе сольфеджио ҫанă тавăрса вĕренет вăл: сĕрме купăс калама хăнăхать, шкулти симфони оркестрĕнче вылять, хорта юрлать. Ҫуллахи каникулсен вăхăтĕнче Ф. Павлов тăван ялĕнче халăх юрри-кĕввине ҫырса илет, унтан вĕсене хăйĕнчен хушса илемлетет.

1911 ҫулта Ф. Павлов Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухать. Музыка тĕлĕшĕнчен уйрăмах пултаруллă ҫамрăка валли И. Я. Яковлев шкултах ĕҫ тупать. Халăх юррисене пухас ĕҫе инспектор сулмаклăн пуҫарасшăн пулнă, шкулта музыкăна вĕрентессине чăн-чăн профессилле музыка культури шайне ҫĕктесшĕн. Ҫак тĕллевпе вăл пултаруллă ҫамрăксене, Ф. Павловпа іĕрле вĕренсе тухнăскерсене, шкулта ĕҫе вырнаҫтарать. Вĕсен путĕнче — каярахпа паллă композиторсем пулса тăнă С. М. Максимовпа Г. Г. Лисков, К. Н. Эсливанова юрăҫ.

Шкулта ĕҫленĕ ҫулсенче (1911—1913) Ф. Павлов музыка теорийĕпе историне тарăнрах тĕпчет, ăсталăхне туптать. Композици енĕпе те хăюллăнрах, сулăмлăнрах ĕҫлет вăл халь. Чĕмпĕр шкулĕнче музыкăна вĕрентесси чылайранпа пынă пулин те, Ф. Павлов, вĕрентекен ĕҫне кӳлĕнсе, ку енĕпе ҫĕнĕ утăм тăвать. Вăл ертсе пыма пуҫласан вĕренекенсен хорĕн тата шкулти симфони оркестрĕн сăн-сăпатĕнче ăсталăха туйса, якатса ҫитерни профессионализм паллисем уҫăмлăн курăнса каяҫҫĕ. Ҫакна Чĕмпĕр обществин культурăллă сийĕсенче те тӳрех асăрхаҫҫĕ; чăваш чунĕ музыка тĕлĕшĕнчен ҫав тери сисĕмлĕ пулнине пичетре те пĕрре мар асăнаҫҫĕ.

Наци культурине чĕртсе, ăна малалла аталантарассишĕн ҫунса ĕҫлекен Ф. Павлов шкулта вĕренекенсен тата педагогсен вăйĕпе М. Глинкăн «Иван Сусанин» оперине лартас тĕллевпе нумай вăй хурать. Хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ сцена ăстисем 1913 ҫулхи нарăс уйăхĕнче оперăн уйрăм пайĕсене кăтартаҫҫĕ. Тĕп партисене юрланă Ф. Павловпа (Сусанин) К. Эсливанова (Антонида) ăсталăхне «Симбирянин» хаҫат ырăпа асăнса хакланă [37]. Ҫакă вăл шкул йышĕшĕн хăйне евĕр пысăк ҫитĕнӳ пулнă, вăл вĕренекенсене те, вĕрентекенсене те хăйсен пултарулăхĕн хевти кĕрнексĕр маррине ҫирĕплетсе панă. Паллах, ҫак пусăм талантлă ҫамрăксен чун-чĕринче ҫĕнĕ тĕллев ҫуратать, вĕсем ĕнтĕ ыран-паян чăвашсен хăйсен опери ҫуралас пирки пĕртте иккĕленмеҫҫĕ.

Ф. Павлов икĕ ҫул хушши шкулта пысăк хавхаланупа, музыкăна пĕтĕм чунпа парăнса ĕҫлет. Профессионализм ӳсĕмĕн картлашкисем вĕҫĕмсĕр ҫӳлелле хăпараҫҫĕ, анчах та вăл Чĕмпĕр шкулĕнче ҫакна валли майсем ҫителĕксĕррине туйса илет. Аслă шкула кĕмелли ҫул хупă пулни ҫамрăкăн чун-кăмăлне

ыраттарнă. И. Я. Яковлев пулăшнипе 1913 çулхи кĕркунне Ф. Павлов Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕн 4-мĕш класне вĕренме кĕрет. Тĕн патне чунĕ туртсах кайман пулин те, пĕтĕмĕшле культурине ӳстерес тĕлĕшпе кунти лару-тăрусем меллĕ пулнă «Семинари наукипе çуммăнах пĕтĕмĕшле истори, физика, Хĕвеланăç Европа литературисен историне, вырăс общество шухăшĕн историне тата француз чĕлхи вĕрентĕм...»[38] Кунпа пĕрлех çак йĕркесен авторĕ семинарире тĕнчипе паллă композиторсем ятарласа чиркӳ валли çырнă тĕн музыкине те ăша илнĕ, унпа чун-кăмăлне çĕкленĕ, хавхаланнă.

1916 çулхи çу уйăхĕнче семинарие пĕтернĕ хыççăн Ф. Павлов пĕр вăхăт Кушлавăш чиркĕвĕнче псаломщикре тăрать, унтан Палтай ялĕн шкулĕнче ачасене вĕрентет. 1917 çулхи çурла уйăхĕнче ăна халăх судĕнче ĕçлеме суйлаççĕ. Октябрьти революци хыççăн Ф. Павлов пĕтĕм пултарулăхĕпе вăй-халне Чăваш наци культурине аталантарас ĕçе парать. Чăвашсен паллă композиторĕ тата çыравçи, менингит чирĕнчен сывалма кайсан, Сочире 1931 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнче çĕре кĕнĕ. Ăна Сочи хулин масарне пытарнă.

Ф. Павлов биографийĕн Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ, унтан çакăнтах ĕçлесе пурăннă тапхăрĕнче музыка культурипе çыхăннă ĕçĕ тĕп вырăн йышăнать. Поэзие илес пулсан, ăна çиелтен пăхсан курăнман, юр айĕнчи шыв юхăмĕпе танлаштарни вырăнлă пулĕ. Вĕренчĕкле çырнă сăввисене çамрăк поэт хăйĕн тус-юлташĕсене халаллать. Вăл хавхалану саманчĕпе чун екки уçăлсан, экспромтла йĕркесем те çырса хурать. Чи малтанхи сăввисене поэт 1910 çулпа палăртнă, анчах та хăш-пĕрисене вăл иртерех те çырма пултарнă. Чăвашла çырнă сăвăсенче («Вĕлле хурчĕ», «Экспромт», «Савнă хĕр...») юрă кĕвви-çемми, ритмики яр-уççăн палăрса тăрать. Сăмахран, «Вĕлле хурчĕ» сăвăра поэт халăх юрри-кĕввин поэтикине кăмăллани, унăн майĕмелĕсемпе витĕмлĕ усă курма пултарни куç умĕнчех. Сăвă тытăмĕ пĕтĕмпех тенĕ пек параллеллĕх мелĕ çинче никĕсленет. Лирика геройĕ хăйĕн ăшри туйăмĕсене, сарă хĕре пула çунакан чĕрин хусканăвĕсене, «сарă чечек» тăрринче вĕçекен пыл хурчĕн сăнарĕпе танлаштарса, тарăн уçса палăртать. Икĕ сăнара çывăхлатса, автор çапла майпа пăлхануллă та хĕрхӳ кăмăл еккине палăртать: «ман ăшра та çавăн пек тĕрлĕ шухăш пăтранать», тет. Шанчăк та, иккĕленӳ те, тӳсĕмсĕррĕн кĕтни те, ăш çунни те пур çав шухăш пăтраннинче. Çав шухăш аварĕнче тепĕр туйăм та юнашар йăва çавăрнă: ку вăл — ултав.

**Сарă чечек тăррине**
**Пыллă карас терĕн-им?**
**Шанса каяс илемне**
**Çутă сывлăм терĕн-им?**

Чечекĕн ĕмĕрĕ кĕске, вăл часах шанса кайĕ, пыл хурчĕ çавна туймасть. Тен, лирика геройĕ те юратăвăн çунтаракан вучĕ

часах сӳнессе курса тăрать, çапах та чуна çепĕççĕн ачашлакан ултавлă туйăма киленӳллĕн парăнать; ăс-хакăл хăйĕн сивĕ, витĕр куракан чăнлăхĕпе чĕре сассине хуплаймасть.

В. П. Эхмере халаллană «Савнă хĕр...» сăвăра лирика геройĕ чун хусканăвĕсене купăсăн çепĕç те ачаш кĕввине хывать. Купăс хĕлĕхĕсем сăмахпа калама май çуккине те систереççĕ.

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!
Юрататăн пулсассăн,
Итле — купăс мĕн калать:
Санан çутă илемшĕн
Манан шухăш пăтранать.
Эпĕ сана курсассăн,
Хĕвел тухнăн туйанать...»

Çутă илемĕпе, чунри ăнланмалла мар, хăй патне туртакан вăрттăнлăхне пула вĕçĕмсĕр чĕре çине наркăмăш тумлатакан, асап кӳрекен туйăм ку. Лирика геройĕ шанчăк сахалтан, татăклăнах хирĕçлени те çукран хăйĕн кăмăл-туйăмĕн кăварĕпе çунать. Ф. Павловăн çак сăввисене юрату лирикин чи паха тĕслĕхĕсем темелле.

1913 çулта çырнă «Йăсăрка» балладăра пысăк калăплă поэзи хайлавĕн уйрăм енĕсем сисĕнеççĕ. Чăваш литература критикинче ăна М. Федоровăн «Арçурийĕпе» «çывăхлатма» пăхнă тĕслĕхсем те пулман мар[39]. Чăн та, Ф. Павлов классикăлла балладăпа тĕплĕ паллашнă теме май килет. Вăл ун çинчен ниепле те пĕлмесĕр тăма пултарайман. Çапах та икĕ балладăна танлаштарса пăхсан, вĕсен «пĕрпеклĕхĕ» никĕс, идейăпа илемлĕх концепцийĕ тарăнăшне витерейменни тӳрех курăнать. Чи малтан «Йăсăрка» балладăра социалла конкретлăх принципĕ палăрмасть. Ун вырăнне автор шыравĕ философилĕх сулăмĕпе пырать. Тен, вăл кунта ытларах самана уçăмсăрлăхĕпе уйрăм çын кун-çулĕ тикĕс пулманни çинчен шухăшлать? Çавăнпа та хайлава лирика туйăмĕ тарăн витернĕ. М. Федоров балладин текстне петĕмпех тенĕ пек аллитерацисемпе ассонанссенчен, тĕрлĕ танлаштарусемпе янравлă сăмах çаврăнăшĕсенчен — пĕтĕмĕшле илсен, фольклор поэтикин майĕ-мелĕсенчен «шăрçаласа» илемлетнĕ. Кунта сăмахпа сасă вылявĕ час-часах пуплев йĕрне тӳрренех сулăм кӳреççĕ, тепĕр чухне хăйсемех «тĕллев» те пулса тăраççĕ.

Ф. Павлов балладинче кутсăр-пуçсăр çил-тăман симфонине урăхларах мелсемпе кĕвĕленĕ. Тен, авторăн ятарлă тĕллевĕ урăх пулнă? Вăл чăвашсен илемлĕ литературин шухăшлавĕ фольклор туртăмне çĕнтерсе, художествăлла пайăр ăнлану шайне аталанса çитнине, поэзи хавалĕ хушăннине çирĕплетсе парасшăн-и, тен? Çакна асра тытсан, Ф. Павлов балладин тытăмĕнче Пушкинăн «Бесы» сăввин витĕмĕ палăрнине (анчах вăл шутсăр тарăнра!) ăнланса илме йывăр мар. Урăхла каласан, чăваш поэчĕ халь ĕнтĕ литература традицийĕсем çине таянать.

Ф. Павлов еткерӗнче вырӑсла ҫырнӑ сӑвӑсем чылай упранс
юлна. Чӗмпер шкуленче вӗреннӗ, унтан ҫавӑнтах ӗҫлене тап
хӑрта ҫырнӑ саввисене поэт 1913 ҫулта «Памятник моей юно
сти» ятлӑ поэзи тетрадӗнче ҫырса хӑварнӑ. Ҫак сӑвӑ пухх
шапи пирки «Мастер и Маргарита» роман авторӗ М. Булгако
сӑмахӗсемпе калама пулать: ӑннипех те алҫырусем ҫунмаҫҫ
иккен. Ф. Павлов тетраде ҫунтарса ямах шухӑш тытнӑ пулна
анчах та ӑна чӑваш композиторӗ Т. П. Парамонов упраса ха
варма пултарнӑ. Ф. Павловпа Чӗмпер шкулӗнче перле вӗрен
нескер, вӑл хӑйӗн асаилӗвӗнче акӑ мӗн каланӑ: «Чӗмпӗрти ду
ховнӑй семинарире вӗренне чух вӑл вырӑсла повесть ҫырнӑчче
1914 ҫулта вӑл мана хӑй мӗн-мен ҫырнине кӑтартре. Вӗсен
вӑл ҫунтарса яма хатӗрленетчӗ. Унан пысӑк тетрадь ҫине ҫырс
хунӑ повесть пурччӗ, хӗрӗх листана яхӑн печек калӑплӑ тетрадь ҫинче ҫӑвӑсемччӗ. Тата вӑл мана хӑй ҫырса илнӗ халӑ
юррисене кӑтартрӗ. Федор Павловичӑн ҫак алҫырӑвӗсене хӗр
хенсе, эпе вӗсене ҫунтарма памарӑм, хама илтем»[40]. Авто
малалла асилне тӑрӑх, вӑл тетраде тепер пилӗк ҫултан Ф. Пав
лова каялла тавӑрса панӑ. Алҫырура, темиҫе чӑвашла сӑвӑс
пуҫне, пӗтемпех вырӑсла ҫырнӑ поэзи хайлавӗсем. Апла пули
те, весем Ф. Павловӑн эстетикӑлла идеалне, унӑн музыкӑпа
уйрӑлми тачӑ ҫыхӑннӑ поэзи культурине, этика хаклӑхӗн тур
тӑмӗсене яр-уҫҫӑн палӑртаҫҫӗ.

Шкулта вӗреннӗ чух литература урокенче сочинени вырӑнне ҫырнӑ сӑвӑсенчех автор тавралӑха поэт куҫепе санама пултарни, унӑн сӑрӑсен палитри пуянни курӑнать. Н. И. Колосков верентекен, сӑмахран, «Зима», «В сумерках юности», «Ожидание и надежда», «Весна» сӑвӑсене чи пысӑк паллӑпа пахаланӑ Теллӗн-тӗллӗн хӗллехи ҫутҫанталӑкӑн чуна ҫывӑх сӑрӗ-тӗсӗсене автор Пушкин сӑввисенче тупма пултарни сисӗнкелет. Ҫапах та «яшлӑх палӑкӗсенче» ҫутӑ, чуна ҫупӑрлакан гармонилле туйӑм сахалтарах, вӑхӑт шунӑҫемӗн вӑл татах та чакса, сӳнсе пыни санланса юлнӑ. Чӑваш поэтне Лермонтов музи хӑй патне туртать, уйрӑм сӑввисенче вӑл ҫав асамлӑ идеал туртӑмне уҫҫӑн палӑртать. Ун йышши сӑвӑсенчен ҫаксене асӑнма пулать: «Подражание Лермонтову», «Опять воздушное виденье...», «Мой демон». Тепӗр чухне Лермонтов поэзипе хавхаланни ҫиелтен (сӑвӑ ятӗнчен) палӑрса тӑмасть. Ф. Павлов вырӑс поэчен лирикинче философилле шухӑшсем шырать. Чунри хупланнӑ шанчӑксемпе сӳннӗ ӗметсен ирӗлми пӑрӗ, таврари ҫынсем ҫине кӑштах иронипе пӑхакан герой сӑн-сӑпачӗ Ф. Павлов сӑввисенче ытларах та ытларах палӑрса пырать.

Апла пулин те, хушӑран поэт кулленхи пурнӑҫӑн ытараймн тӗсӗсемпе хавхаланни, ун кӑмӑлӗ ҫекленни сисенет. Кунашкал туртӑмлӑ сӑввисенче вӑл А. Фетран веренни, унӑн ҫепӗҫ лирикине чунпа пахалани курӑнса тӑрать («После грозы», «Осенние аккорды», «Звукам залетной любви», «Ноктюрн , «Милая крошка» т. ыт. те). Фет поэзийӗн музыкипе асамлӑхӗ пирки,

ун тарӑ ҫӑлкуҫенчен сахал мар черӗ сеткен еҫсе хавхаланни ҫинчен автор П. Хусанкая каласа кӑтартнӑ. «Фет-Шеншина вуласа и? Питӗ нумай парать. Сенетӗп»,— тене вӑл поэзи ҫинчен сӑмахланӑ май ҫамрӑк сӑвӑҫа» [41].

Ф Павлов поэзи культурин шайне ӳстерсе пынӑ май тӗнче литературин классикӑлла теслӗхесене тарӑн тепчене. Шӑратса, пӗрчӗн-перчӗн пухса илнӗ эстетикӑпа философи пуянлӑхӗнчен вӑл ятран палӑк лартать. Ҫав тери сӑнавлӑ куҫпа, тишкерсе вуласан, «яшлӑх палӑкӗсенче» хӑш-пӗр классиксен уйрӑм йеркисене е шухӑшесене асӑрхатӑн. Сӑмахран, «Товарищу» сӑввинче автор юри тене пекех, куҫа курӑнмалла Гейне йӗркисене («Когда-то друг друга любили мы страстно...», нимӗҫлерен М. Михайлов куҫарнӑ) «цитатӑлать»:

Друзьями мы были,
Хоть ссорились часто,
Но жили прекрасно —
Теперь все забыли!

Туслахпа юлташлӑх теми «Послание к П. Александровичу», «Друзьям» сӑвӑсенче те тӗпре. Ф. Павлов ҫавӑн пекех А. Толстой, А. Майков, Я. Полонский, Л. Мей, А. Апухтин поэзине кӑмӑллани, ҫав поэтсен пултарулӑхне лайӑх пелни перре те иккӗлентермест.

«Памятник моей юности» алҫыру революцичченхи чӑваш поэзийенче паллӑ вырӑн йышӑнать. Унта кертне сӑвӑсенчен ытларахашне автор вырӑсла ҫырнӑ пулин те, вӑл чӑваш поэзийӗн шыравесене тарӑнрах тишкерме пулӑшать. Ф. Павлов ҫав сӑвӑсене мӗншен-ха пичетлес тесе хыпӑнман? Мӗншен тесен вӑл чӑваш поэзийен хӑйчченхи тата хӑй вӑхӑтӗнчи традицийӗсемпе ҫырлахмасӑр, «тап-таса лирика» тӗсӗсене пуянлатмалли, чун тӗпенчи туйӑмсене уҫса памалли ҫул-йӗрсене хӑюллӑн палӑртма вӑй ҫитерне. Ҫавӑнпа вӑл хӑй ҫул-йерне вырӑссен «таса поэзи» юхамне никӗслене лирикӗсен асамлӑ та пархатарлӑ туртӑмне паранса шыранӑ. Ку вӑл чӑваш поэзийӗшен пӗтемпех ҫӗнӗ пулна-ха. Ф. Павлов поэзипе музыкан шалти ҫыхӑнӑвне ырми-канми тепчет, ҫавӑнпа ӑна вырӑс романсӗ илӗртет, унта чӑваш поэче малаш ҫула кӑтартакан теслӗх курать.

«Памятник моей юности» ятлӑ сӑвӑ пуххине Ф. Павлов хӑй ҫирӗм пе ҫулта чухне хатӗрленӗ. Халӗ ҫак пысӑк мар тетрадь чӑннипех те автор яшлӑхенче ӗмӗрлӗхе ӳкерӗнсе юлнӑ хӑйне майлӑ палӑк пек туйӑнать.

Ф. Павловӑн илемлӗ литературӑра палӑрнӑ таланчӗн тепер енӗ — драматурги хайлавӗсем. «Ялта» драмӑпа «Судра» комеди авторне совет тапхӑрӗнчи чӑваш драматургийӗн никӗсне хывакане тесе чыслани те вырӑнлӑ. «Ялта» драмӑна автор империализм вӑрҫи пынӑ тапхӑрта ҫырма пуҫланӑ. Ҫав вӑхӑтри чӑваш драматургинче Ф. Павлов калӑпланӑ йышши сӑнарсем

пачах та пулман-ха. Çапах тӑ драмӑн чи вӑйлӑ енӗсем унӑн философилле тарӑнлӑхӗнче, этем чунӗн чи шалти, вӑрттӑн хусканӑвӗсене яриех уçса кӑтартма вӑй çитерниче темелле. Характер аталанӑвӗ кунта хӑй сулӑмӗпе пырать, автор персонаж чунӗн еккине туйнӑран ун ури çине пусмасть, вӗсене алӑран çавӑтса çӳрес тени те сисӗнмест. Çавӑнпа та тепӗр чух этем чунӗн пӑсӑклӑхӗ чарусӑррӑн арасланса каять, Шекспир пьесинчи сулӑмпа куç умне тухса тӑрать. Çапла майпа автор чӑваш драматургинче çӗнӗ çул-йӗрсем палӑртать.

Совет саманинче Ф. Павлов музыка искусствинче те, илемлӗ литература каçалӑкӗнче те «пӗр» пекех пултаруллӑн ӗçлесе культура ӳсӗмӗнче тарӑн йӗр хӑварать. Чӑваш наци культурине пур енлӗн аталантарас йывӑр ӗçре вӑл яланах малти ретре пынӑ. Ф. Павлов ӗмӗрӗ ытла та кӗске пулнӑ, вӑл вӑтӑр сакӑр çултах çӗре кӗнӗ. Апла пулин те, унӑн хамӑр халӑха панӑ пӗтӗм пултарулӑхӗпе ӗç-хӗлӗ вӑхӑт иртнӗçемӗн çӗнӗрен-çӗнӗ енӗсемпе уçӑлать, пӗлтерӗшӗ те ӳссех пырать.